25-мёш çул тухать. Хакё 15 пус.

1942 АВГУСТ 8 ШАМАТКУН 184(6119) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Тырпула капана хывас ĕçе кая хăвармалла мар

Ĕçĕн ответлăхне тĕплĕн туйса илсе, колхозниксемпе колхозницăсем тырпулсене кĕске срокра, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Вăрçă условийĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе акса çитĕнтернĕ вăйлă тырпула лайăх пухса кĕртесси—халĕ колхозниксемпе колхозницăсем, райçĕрĕç пайĕсен руководителĕсем, МТС политотделĕсенче ĕçлекен работниксем умĕнче тăракан чи ответлă задача. Кашни колхоз уборкăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах кĕлтесене уйран итемсем çине кĕртсе капана хывса пымалла, тырра вырнă май çапса пыма тăрăшмалла, пĕр тăхтамасăр, чи малтан çапнă тара тырра парса государство умĕнчи обязательствăсене татмалла.

Республикăн чылай районĕсенче тырă вырас ĕç пысăк хăвăртлăхпа пулса пырать. Вăрмар районĕ августăн 5-мĕш тĕлне ыраша 6.127 гектар, Елчĕк—5.879 гектар, Шăхасан—4.385 гектар, Тăвай—3.812 гектар вырса çĕмеле хывнă. Елчĕк районĕнчи 22 колхоз ыраша пĕтĕмпех вырса çĕмел тунă. Вăрмар, Елчĕк, Куславкка тата ытти хăшпĕр районсенчи 10—15-шер колхоз çĕнĕ тырра итемсем çине кĕртсе авăн çапма пуçланă. Шăмăршă районĕнчи «Победа» колхоз ĕнер 38 гектар çинчи тырра çапнă. Вăрмар районĕнчи «Тугас» колхоз государствăна 100 центнера яхăн çĕнĕ тырă панă. Августăн 5-мĕш тĕлне пĕтĕм республикăра пучахлă тырăсене пурĕ 78.531 гектар вырса çĕмеле хывнă. Уборка кампанийĕн иртнĕ 1941-мĕш çулти ĕçĕсемпе танлаштарсан, кăçал республика тырпула вырса пухас ĕçе чылай пысăкрах хăвăртлăхсемпе туса пырать. Республикăри колхозниксемпе колхозницăсем уборкăра кăçал нумай хут лайăхрах та пахарах тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ.

Тырă вырас ĕçĕн хăвăртлăхне малашне те ÿстерсе пымалла, ĕçĕн пахалăхне татах та лайăхлатмалла. Мĕнпур пек тырра пĕтĕмĕшпех тĕплĕн пухса кĕртессишĕн колхозсенче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пымалла. Уборкăра кăтартуллăн, фронтри боецсем пек хастарлăн ĕçленинчен ытла, çапла ĕçленипе тăшмана аркатса тĕп тăвас ĕçре Хĕрлĕ Çар боецĕсене хĕрÿллĕн пулăшса тăнинчен ытла халĕ хисеплĕрех те чыслăрах ĕç урăх çук. Çавăнпа та халĕ пиншер колхозниксем уборкăра паха тĕслĕхсемпе ĕçлеççĕ. Куллен икшер-виçшер норма тултарса тырă выраççĕ, çыхаççĕ, кĕлтесене çĕмеле хываççĕ, авăн çапаççĕ.

Республикăри колхозсен, колхоз руководителĕсемпе районсенчи çĕрĕç органĕсен кăçал ĕçре иртнĕ çулта тунă йăнăшсене асра тытмалла. Кăçал кĕлтесене вăхăтра турттарса, вăхăтра капана хывас ĕç çине пирĕн уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Ку ĕçе тивĕçлĕ хак парса çийĕнчех туса пымалла.

Шăмăршă районĕ кăçал иртнĕ çулта тунă йăнăша шута илсе ĕçлет. Районри колхозсем вырнă тырăсене çийĕнчех итемсем çине турттараççĕ, капана хываççĕ. Паянхи куна район пурĕ 60 гектар çинчи ыраша капансене хывнă. Вĕсен примерĕпе ытти районсенчи колхозсен те ыраш кĕлтисене çийĕнчех итем çине турттарма тытăнмалла.

Тăван çĕршыв нимĕç оккупанчĕсене хирĕç хаяррăн çапăçнă вăхăтра кашни пăт тырă хаклă, вăл тăшмана аркатма, пĕтерсе тăкма питех те кирлĕ. Тырпула вăхăтра, тăккаламасăр вырнипе пĕрлех, ăна хиртен çийĕнчех пуçтарса кĕртмелле. Халĕ, тырă вырас ĕç хăвăрт, массăллăн пулса пынă чухне, хăшпĕр колхозсенче вырнă тырпула çыхасси, кĕлтесене çĕмеле хывасси юлса пыни палăрать. Çак çитменлĕхсене колхозсен халех пĕтермелле. Жнейкăсемпе вырнă тырра пĕр кун кая хăвармасăр çийĕнчех çыхса пымалла. Çавăн пекех комбайнсем хыççăн выртса юлакан улăма та тикĕс пуçтарса вăхăтра купаламалла.

Кĕлте капанĕсене, улăм урисене итемсем çинче вырнаçтарассине те тата колхоз тыррине вут-кăвартан, тĕрлĕ инкек-синкекрен упраса усрассине те колхозсен кăçал пĕлсе организацилемелле. Капансене тачă лартмалла мар, итемсем çинче çирĕп йĕркелĕх тумалла, революциллĕ сыхăлăх халĕ нихăçанхинчен те çивĕч пулмалла.

«1942 çулти тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăтартса панисене вĕçне çитиех тĕплĕн пурнăçа кĕртер, тырпула пухса кĕртес ĕçе хăвăрт вĕçлесе, Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыва—нумай тырпул, пахча çимĕç, промышленноçа—нумай чĕртавар туса парар!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 6-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿрен

Августăн 6-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетская, Котельниково** районĕсенче, **Белая Глинăран** кăнтăрарах тата **Кущевскаяран** кăнтăрарах вырăнсенче хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Августăн 5-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 50 çити танкне, 5 бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 400 çити автомашинине, боеприпассем тиенĕ 50 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 4 складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, чугунçул çинчи состава çĕмĕрсе тăкнă, противникăн пехотине 3 батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетская районĕнче тата çав пунктран кăнтăрарах вырăнта вăйлă çапăçусем пынă. Уйрăм участоксенче пирĕн рĕç пыра-пыра çапнă. Нимĕçсен пехо-войскăсем противникăн войскисене хитин пĕр полкĕ 30 танк пулăшса пынипе пирĕн пĕр часа атакăланă. Совет войскисем флангсенчен пулеметсемпе персе тăшманăн пехотине унăн танкĕсенчен уйăрса илсе хĕссе лартнă. Артиллерирен персе нимĕçсен 9 танкне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăтра пирĕн войскăсем контратакăна кусна. Гитлеровецсем каялла чакнă. Çапăçу хирне противникăн 550 салтакĕпе офицерĕ вилсе выртса юлнă. Клетскаяран кăнтăрарах вырăнта Н-ски часть танксен подразделенийĕпе пĕрле пулса противника хĕснĕ тата лайăхрах рубежсем йышăннă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Котельниково районĕнче пĕр ансăр участокра гитлеровецсем танксемпе темиçе хутчен хаяр атака тунă. Противник пирĕн оборонăн ăшне савăлланса кĕме пултарнă. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн чаçсем оборона тумалли çĕнĕ рубежсем патне чакнă. Çав çапăçура нимĕçсен 10 танкне тата противникăн 400 çити салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белая Глинăран кăнтăрарах районра пирĕн войскăсем противникăн наступлени тăвакан танкĕсемпе мотопехотине хирĕç оборонăллă хаяр çапăçусем туса пынă. Хăшпĕр участоксенче пирĕн чаçсем тăшмана хирĕç çапăçса çĕнĕ рубежсем патне чакнă. Нимĕçсем пирĕн войскăсен тылне сывлăшран десант антарма хăтланнă. Пунктсенчен пĕринче тăшманăн автоматчикĕсене тиенĕ «Юнкерс—52» йышши 9 транспортнăй самолет анса ларнă пулнă. Совет летчикĕсем çав вырăна çийĕнчех атакăланă та нимĕçсен 6 самолетне çунтарса янă, виçĕ самолетне сиенленĕ. Десантăн юлашкийĕсене пирĕн çĕр çинчи войскăсем пĕтерсе тăкнă е тыткăна илнĕ. Кущевскаяран кăнтăрарах районра пирĕн войскăсем тăшманăн атакисене сирсе пăрахнă. Дон тата Кубань казакĕсем, нимĕçсен фашистла войскисем тăракан вырăна темиçе хутчен кĕре-кĕре кайса, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене касса-вакласа тăкнă, тăшмана пысăк сухатусем тÿстернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче кĕрешекен Н-ски чаçри снайперсем пĕр кун хушшинче 79 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче нимĕçсен 60 салтакĕ тыткăна парăннă. Тыткăна парăннă обер-фельдфебель Алоиз У. çапла пĕлтернĕ: «Пирĕн ротăра мĕнпурĕ 180 çын пулнă. Вĕсенчен 120 çын çапăçусенче вилнĕ е аманнă. Юлашки çапăçу умĕн рота командирĕ лейтенант Шуберт пире жертвăсем çавтери нумай пулнине пăхмасăрах вырăссен атакине сирсе яма хушрĕ. Анчах та вырăссен танкĕсем курăнсанах Шуберт хăй тарса пытанчĕ. Пирĕн оборона тума е хамăр йышăнса тăракан позицисене пăрахса хăварса каялла чакма майсем пулнă. Анчах та эпир тыткăна парăнма шут тытрăмăр. Вырăссен танкĕсем çывхарма пуçласан, эпир хамăрăн салтаксене: «Ан перĕр, алăсене çĕклĕр те тухăр», тесе команда патăмăр. 60 салтакран тăракан рота тыткăна парăнчĕ. Эпир хамăр юлташсене те пирĕн пекех тума сĕнетпĕр».

* * *

Советăн тытса илнĕ районĕсенче нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем крепосла право йĕркийĕ тăваççĕ. Полтава облаçĕнчи Александровка ялĕнче нимĕçсен коменданчĕ пур колхозниксене те эрнере 3-шер кун нимĕçсен Шварц ятлă помещикĕн хуçалăхĕнче ĕçлеме хушнă. Çав барон полицейскисен отрядне тытса пурăнать, полицейскисем вара хресченсене ирĕксĕрлесех ĕçлеме хăваласа каяççĕ. Хĕрарăмсене лашасем вырăнне кÿлеççĕ те уй-хиртен анкартисене кĕлтесем турттарттараççĕ.

* * *

Париж хулин тулашĕнче вырнаçнă авиаци заводĕнче забастовка пуçланнă. Францири рабочисем нимĕç-мастерсене заводран пурне те кăларса яма ыйтнă. Заводăн администрацийĕ рабочисемпе калаçма килĕшмен. Эсесовецсем 400 француза арестлесе концлагерьсене илсе кайса хупнă. Гитлеровецсем çавтери хаяр мерăсем йышăнса та рабочисене хавшатма пултарайман. Рабочисен забастовки халĕ те пырать.

Августăн 7-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Августăн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетская, Котельниково** районĕсенче, **Белая Глинăран** кăнтăрарах, тата **Кущевскаяран** кăнтăрарах вырăнсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусемех те пулман.

* * *

Клетская районĕнче нимĕç танкĕсен колонни пирĕн оборонăн линине татса кĕме хăтланнă. Пирĕн позицисем патне çитиччен тăшманăн 3 танкĕ минăсем лартнă вырăна пырса кĕрсе çĕмĕрĕлнĕ. Пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем, çывăх дистанцирен персе, тăшманăн 5 машинине çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă. Унтан çапăçăва пирĕн йывăр танксен подразделенийĕ кĕнĕ. Тупăсенчен персе тата танксемпе пыра-пыра çапса, пирĕн хăюллă танкистсем нимĕçсен татах 14 танкне пĕтерсе тăкнă. Противникăн ытти танкĕсем çапăçуран тухнă та хăвăрттăн тарса пытаннă. Клетскаяран кăнтăрарах вырăнта пирĕн войскăсем темиçе контратака туса тăшмана хĕснĕ. Çав çапăçусенче нимĕçсен 9 танкне тата 800 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Котельниково районĕнче гитлеровецсем, пирĕн оборонăна çĕмĕрес тесе, çапăçăва танксене йышлăн кĕртсе яраççĕ. Пирĕн чаçсем противникăн çав атакисене сире-сире пăрахнă. Пĕр участокра кăна нимĕçсен 10 танкĕ тата автоматчиксен чылаях пысăк ушкăнĕ совет чаçĕсем вырнаçса тăнă çĕре савăлланса кĕнĕ. Пуçланса кайнă çапăçура нимĕçсен 4 танкне тата 200 автоматчикне ытла пĕтерсе тăкнă. Совет авиацийĕ активлăн кĕрешет. Пĕр талăк хушшинче пирĕн летчиксем противникăн танковăй чаçĕсем çине нумай хутчен вĕçсе пыра-пыра бомбăсем пăрахнă, противника пысăк сухатусем кÿнĕ. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 18 самолетне персе антарнă тата 13 самолетне сиенленĕ.

* * *

Белая Глинăран кăнтăр енчи районра пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç оборонăллă йывăр çапăçусем туса пынă. Участоксенчен пĕринче вăйлă çапăçусем хыççăн противник кăштах малалла куçма пултарнă. Кущевскаяран кăнтăрарахри районра нимĕçсен фашистла войскисем пирĕн позицисене темиçе хутчен те атакăланă. Гитлеровецсен атакисене, тăшмана пысăк сухатусем кÿрсе, сире-сире пăрахнă. Н-ски соединенири боецсем нимĕçсен 9 танкне, 60 автомашинине çунтарса янă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 700 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Волхов фронтĕнче противникăн пысăк мар ушкăнĕсемпе тытăçусем пулса иртнĕ тата артиллерирен, пăшалсенчен хире-хирĕç сайра-хутран персе тăнă. Пирĕн отряд, тăшмана кĕтмен çĕртен пырса çапса, халăх пурăнакан пысăк мар пункта çĕмĕрсе кĕнĕ те унтан нимĕçсене хăваласа кăларнă. Пĕр оруди тата икĕ пулемет тытса илнĕ.

* * *

Брянск фронтĕнче разведка тăвакан группăсем кĕрешнĕ. Вахрушев, Юсупов лейтенантсем тата старши политрук Александров ертсе пыракан разведчиксем противникăн укреплениĕсене çĕрле хăюллăн пырса тапăннă. Окопсем хушшинче çÿремелли çĕре тата дзотсене кĕтмен çĕртен çĕмĕрсе кĕрсе, вĕсем 40 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, станковăй пулемет тытса илнĕ тата нимĕçсен обер-ефрейторне тыткăна илнĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансем, противникăн коммуникацийĕсем çинче кĕрешекенскерсем, иртнĕ икĕ эрне хушшинче нимĕçсен чугунçул çинчи 12 эшелонне, чĕрĕ вăйпа çар грузĕсем турттарса пыраканскерсене, ÿпĕнтерсе янă. Совет патриочĕсем «Юнкерс—52» йышши транспортнăй самолета çунтарса янă. Çав самолет çĕр çине ирĕксĕр анса ларнă пулнă. Пехотăн хĕçпăшалĕнчен персе, партизансем нимĕçсен бомбардировщикне ÿкернĕ.

* * *

Аяларахра Венгрин 44-мĕш полкĕн 9-мĕш ротинчи салтакăн Иштван Кишăн записной кĕнекинчен уйрăм вырăнсене илсе пичетлетпĕр: «Нумай ялсемпе хуласем витĕр иртсе килтĕмĕр... Белая Церковь хулинчен ишĕлнĕ купасем кăна тăрса юлнă. Кунта нимĕçсен ĕçĕ курăнса тăрать. Урам-урамăн çĕрпе танлашнă. Ялсенче те çавнашкал сăнсăпатах. Пур çĕрте те ишĕлнĕ çуртсем...

Партизансене хирĕç çапăçма кунĕпех хатĕрлентĕмĕр. Носовкăра мĕнпур çуртсене ухтарса тухрăмăр, анчах пĕр партизана та тупаймарăмăр. Ухтарнă чухне хамăра мĕн кирлине пурне те туртса илетпĕр. Ватă учителе ярса тытрăмăр. Çийĕнчех допрос турăмăр та çавăнтах виселица çине туртса хăпартрăмăр. Отделени командирĕ унăн хăлхисене касса татрĕ. Çакă вăл хăрatma кирлĕ...

Çĕрлехи йывăр марш. Уланово ялĕнчен инçех мар пирĕн çине кĕтмен çĕртен пуля çумăрĕ тăкăнма пуçларĕ. Партизансем пулеметсенчен, автоматпистолетсенчен тата автомат-винтовкăсенчен переççĕ. Батальонра çынсем çурри ытла пĕтрĕç... Пире ирсĕррĕн улталарĕç. Партизансене пĕтерсе тăкма çитĕ çăмăл тесе калатчĕç пире, анчах та вĕсем, чăннипе илсен, регулярнăй войскăсенчен пĕре те кайра тăмаççĕ. Вĕсем яланах засадăран тата яланах кĕтмен çĕртен пыра-пыра çапаççĕ. Кашни утăмрах хăраса тăратăн, мĕншĕн тесен кирек-мĕнле вырăнта та пуля тăрăнма пултарать»

* * *

Çамрăк бельгиецсен хĕçпăшалланнă ушкăнĕ нумаях пулмасть Брюссельре СС войскисен штабĕ çине пырса тапăннă. Ручной гранатăсемпе 30 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Хăюллă патриотсем тĕрмене сăрхăнса кĕнĕ, унтан Бельги заложникĕсене темиçе вуншар çынна ирĕке кăларнă та хăйсем тарса пытаннă.

ССР Союзĕпе США хушшинчи малалла тăснă суту-илÿ килĕшĕвĕ вăя кĕни

Совет Союзĕн Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи посолĕ М. М. Литвинов тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Государственнăй секретарĕ г. Корделл Хэлл кăçалхи июлĕн 31-мĕшĕнче пĕрпĕрин патне Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Совет Союзĕ хушшинчи суту-илÿ килĕшĕвĕн срокне тăсасси çинчен калакан нотăсем янине ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1942 çулти августăн 1-мĕшĕнче çирĕплетнĕ. Çак килĕшĕве пĕтерессi çинчен унăн срокĕ тухиччен 6 уйăх малтан пĕлтерсе хурса ун вырăнне анлăрах суту-илÿ килĕшĕвĕ тумасассăн, çак килĕшÿ вăл малта кăтартнă срок хыççăн та законлă пулса тăрать.

ССР Союзĕпе США хушшинчи суту-илÿ килĕшĕвне, М. М. Литвиновпа г. Корделл Хэлл çÿлте кăтартнă пек пĕрпĕрин патне нотăсем ярса малалла тăснăскерне, 1942 çулти августăн 1-мĕшĕнче США президенчĕ прокламациленĕ.

Çапла ĕнтĕ ССР Союзĕпе США хушшинчи малалла тăснă суту-илÿ килĕшĕвĕ вăя кĕнĕ.

Генерал-майор Ф. Брэдли Мускава килни

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчен ССР Союзне хĕçпăшалсемпе çар материалĕсем тăратассипе çыхăннă практикăллă ыйтусене тивĕçлĕ совет органĕсемпе сÿтсе-явма. Вашингтонран Мускава США çарĕн генерал-майорĕ Фоллет Брэдли килнĕ.

Турцин ССР Союзĕнчи посолĕ пулма çĕнĕрен уйăрса лартнă Ачикалын каласа пани

АНКАРА, августăн 4-мĕш. (ТАСС). Паян ССР Союзне тухса каяс умĕн Турцин ССР Союзĕнчи посолĕ пулма çĕнĕрен уйăрса лартнă Ачикалын ТАСС корреспондентне çакăн пек пĕлтернĕ: «Пирĕн кÿршĕ тата тус пулса тăракан Совет Союзĕнче хамăрăн çĕршывăн представителĕ пуласси ман тÿпене килсе тухнипе эпĕ питех те телейлĕ. Эпĕ ССР Союзне пĕлетĕп, мĕншĕн тесен унта вунă çул ытларах пострa тăнă тата нумаях пулмасть унта командировкăра пулнă. Эпĕ çав çĕршывра пулни çинчен тата унăн руководителĕсемпе эпĕ тачă çыхăну тытни çинчен чи лайăх кăмăлпа аса илетĕп. Çавăнпа та эпĕ унта пĕтĕм чун-чĕререн хаваслансa тавăрăнатăп тата Турципе ССР Союзĕ хушшинчи хальхи туслă çыхăнусене малалла та çирĕплетсе пыма ĕмĕтленетĕп».

Колхозниксемпе колхозницăсем! Тырпула вырнă хыççăн кĕлтесене çĕмеле хывмасăр ан хăварăр. Кĕлтесене вăхăтра çĕмеле хывни çĕршер пăт тырра упраса хăварать

Тырпулсене пухса кĕртес ĕç республикăри колхозсенче мĕнле пырать

Августăн малтанхи кунĕсенче пирĕн республикăри уйхирсенче тырпулсене массăллăн пухса кĕртес ĕç пуçланчĕ. Августăн 5-мĕш тĕлне республикăра 78.531 гектар вырнă, çакă вăл кĕрхи тата çурхи тĕштырă культурисен çĕр лаптăкĕн 18,1 процентĕ пулать. Вăрмар районĕнчи колхозсем кĕрхи тырăсене 6.127 гектар вырса пуçтарнă, плана 22,7 процент пурнăçа кĕртнĕ. Тырă вырас тĕлĕшпе республикăн пĕрремĕш вырăнта Кувакино районĕ тăрать, унта 4.631 гектар вырса плана 25,8 процент тултарнă.

Тăвай, Елчĕк, Чкаловски, Пăрачкав районĕсенчи колхозсенче тырпулсене пухса кĕртес ĕç хĕрÿллĕн пулса пырать. Çак районсенче пучахлă тырăсем акнă çĕр лаптăкĕн пиллĕкмĕш пайне яхăн вырнă.

Уборка ĕçĕсем кăçал пирĕн республикăра иртнĕ çултинчен чылай организованнăрах пулса пыраççĕ. 1941 çулти августăн 5-мĕш тĕлне Кувакино тата Тăвай районĕсенче икĕ хут, Вăрмар районĕнче вара вунă хута яхăнах кăçалхинчен сахалрах вырнă пулнă. Пĕтĕм республикипе 1941 çулти августăн 5-мĕш тĕлне тырпул пухса кĕмелли плана 3,5 процент кăна тултарнă пулнă,

Анчах та çакă ĕнтĕ тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларма тата ĕçе вăйсăрлатма право памасть. Уборка хăвăртлăхĕсене вăйлатас пулать. Уйрăм районсенче тырпулсене пухса кĕртес ĕç чăтма çук вăраха кайса пырать. Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă, Ишлей, Красноармейски, Сĕнтĕр тата Йĕпреç районĕсенче тырпул акнă çĕр лаптăкĕн 10 процентне те вырса çитереймен. Тырă вырас ĕç хуллен пулса пыни акă мĕнрен килет: парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем тата, пуринчен малтан, райçĕрĕç работникĕсем тырпула суйласа вырма колхозсене вăхăтра кăларайман, çавăнпа та колхозсем нумай вăхăт хушши турткаланса тăчĕç. Çак районсенчи нумай колхозсенче тырпул пухмалли машинăсемпе тата кĕрепленлĕ çавасемпе уборкăн малтанхи кунĕсенчех анлăн усă курассине организацилемен, тырăсене пуринчен ытла çурлапа вырнĕ.

Задача çакăнта пулать: тырпула алăпа вырнипе пĕрлех, комбайнсене тата ытти машинăсене талăкра 16 сехетрен кая мар, пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермелле. «Ĕçлеме пултаракан пĕтĕм халăха тырпул пухас ĕçе явăçтармалла, тулăх тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес тесе пур майсемпе те усă курмалла». (Калинин).

Ĕç нормине тултарман колхозник çук

ШĂХАСАН, августăн 7-мĕш. (**Хамăр корр., телефонпа**). Çĕнĕ Пинерти «Пинер» колхозра тырă вырас ĕç пысăк çĕкленÿпе пулса пырать. Кунта кашни колхозник, колхозница, звено, бригада ĕç нормине куллен ирттерсе тултарать.

Колхозăн ĕç планĕ тăрăх 96 колхозник куллен 9,6 гектар тырă вырмалла, çапла кашни колхозник, колхозница куллен çурлапа 0,10 гектар ыраш вырмалла, кĕлтесене çĕмеле хывса хăвармалла. Колхозниксемпе колхозницăсем уборкăна тухнăранпах куллен 10,38-шар гектар вырса пыраççĕ. Машинăсем те пысăк тухăçлăн ĕçлеççĕ. Жнейкăсемпе пĕр сменăра 4 гектар вырмалла тунă. Д. Демьянов машинист сменăра 5 гектар ытла вырать.

Халлĕхе шутласа пăхнă тăрăх, кашни гектартан 10—12 урапа кĕлте тухать. Çапла колхозниксем кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 15-шер центнер тĕштырă илме шанаççĕ. Паянхи куна колхоз ыраша 90 гектар ытла вырнă, çапла кĕрхи тырăсем вырса пухас плана 70 процента яхăн пурнăçланă. Вăрлăхлăх акнă участоксенче татах та тухăçлăрах тырпул çитĕннĕ. Колхоз вăрлăх участокĕсене пурĕ 36 гектар чи малтан пухса кĕртрĕ. Кунта кашни гектартан 16 центнер тĕштырă тухать.

Анăçлă пулнă тырпула колхозниксем пĕр тăкаксăр вырса пухассишĕн тăрăшаççĕ. Пучахсене çийĕнчех пуçтарса пыраççĕ. Кунсăр пуçне колхозра 20 вĕренекен ачана ятарласах пучах пухас ĕçе явăçтарнă. Вырнă тырра çийĕнчех турттарса капана хывма тăрăшаççĕ.

С. ШАДИН.

Кунне-çĕрне пĕлмесĕр вырмалла

ÇĔМĔРЛЕ, августăн 7-мĕш. (**Хамăр корр.**). Уборкăра кашни сехет, кашни кун хаклă. Пулса çитнĕ тырра вăхăтра вырса илмелле. Халĕ уяр çанталăк тăнă кунсенче кашни колхозăн кунне-çĕрне пĕлмесĕр тырă вырмалла.

Районри «Молодая сила» колхоз членĕсем çак кунсенче пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ. Кашни колхозник, колхозница, ватăсем те, çамрăксем те, уйра тимлĕн ĕçлеме тăрăшаççĕ. Бригадăсемпе звеносем тата колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăрту вăйлăн сарăлса пырать. Колхозниксем кунран-кун лайăхрах ĕçлесе пыраççĕ. О. Бакланов, Д. Ефитаров, А. Отнюкова колхозниксем тырра çурлапа вырса кулленхи нормăна 120—150 процент тултарса пыраççĕ. М. Алюкова, Д. Андрюшкина колхозницăсем кĕрепленлĕ çавасемпе выраççĕ, ĕç нормине кулленех ирттерсе тултараççĕ. Колхоз паянхи куна ыраша çуррине ытла вырнă, ĕнер авăн çапма тытăннă.

Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем ĕç кунĕпе туллин усă кураççĕ. А. Алексеева колхозница кунне 450 кĕлте, Ф. Великова 300 кĕлте выраççĕ. Колхоз 2—3 кун хушшинче 50 гектар ытла ыраш вырса çĕмеле хывĕ.

Анчах та хăшпĕр колхозсенче халĕ те ĕç дисциплини япăх вырăнта тăрать. «Лесной огонек» колхозра чылай колхозниксем ĕç нормине тултарса пымаççĕ. Кунти колхозниксем ĕçе 7—8 сехетре çеç тухаççĕ те хĕвел аничченех çĕрен кĕреççĕ.

Магарин ялсоветĕнчи «Борец» колхозра ĕç дисциплинине халех тивĕçлĕ вырăна çĕклемелле. Кунта тырă вырас ĕçре кашни кунпа туллин усă курма тăрăшмаççĕ. Илем кунне чылай колхозниксем виçĕ кун хушши уявларĕç. Уйра хĕрсе ĕçлес вăхăтра усăсăр прогулсене тĕпренех пĕтермелле.

Х. ЛИСИН.

Хирти стена хаçачĕ

СĔНТĔР, августăн 7-мĕш. (**Телефонпа**). Кăвак çутăллах «Çĕнĕ Юнга» колхозăн хирĕнче колхозниксем хĕрсе тырă выраççĕ.

— Паян иртнĕ кунхинчен ытларах вырас тетпĕр-ха, —теççĕ А. Шутеева, И. Краснова колхозницăсем. Вĕсем ăмăртса ĕçлеççĕ. Иртнĕ кун И. Краснова 535 кĕлте, А. Шутеева 560 кĕлте вырнă. Ванюшкина, Маряшкина колхозницăсем те кулленех 500-шер кĕлте выраççĕ. 13 çулти çамрăк ачасем: Н. Шандимиров кунне 200 кĕлте, Вазикова, Т. Краснова 230-шер кĕлте выраççĕ.

4-мĕш бригадăра (бригадирĕ Виноградов юлташ) кулленех 58 çын ĕçлет. Ĕç дисциплини лайăх. Тепĕр кунтан бригада ыраш вырса пĕтерет.

Колхозра икĕ ясли, вĕсенче 95 ача пурăнать. Бригадăсенче пĕрлешÿллĕ столовăйсем организациленĕ.

Агитаторсем бригадăсенче колхозниксене хаçатсем вуласа параççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ. Паянхи куна пиллĕк номер тухнă та ĕнтĕ. 3-мĕш бригада ĕçленĕ вырăнта ятарласа тунă хăма çинче бригадăн «Паттăр утăм» ятлă стена хаçачĕ çакăнса тăрать. Хаçат ĕç тухăçлăхне вăйлăн çĕклессишĕн, социализмлă ăмăртăва анлăн сарассишĕн тăрăшать. Ăмăрту результачĕсене çутатса тăрать. Çав хушăрах хаçат кахалсене, ĕçе ним сăлтавсăр тухмасăр ларакансене критикăлать. Колхозра А. Голубева ĕçе хĕвел çÿле çĕкленсен тин тухать. Ун çинчен хаçатра карикатура тухнă.

Халĕ колхозниксем уйра çĕр выртсах тырă выраççĕ. Ирхине кăвак çутăллах ĕçе тытăнса, каçхине сĕм тĕттĕмччен ĕçлеççĕ.

Каç. 11 сехет иртет. Эпир уйран таврăнатпăр, çул айккинчи участокра пĕр çын тимлесех тырă вырать.

— **Ку вăл çу заводĕнче ĕçлекен** Маряшкина,—тет колхоз председателĕ Яндушкин юлташ.—Заводран пушансан вăл кулленех ыраш вырма тухать. Кунне 60—70 кĕлте тăвать.

С. НАЛИМОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Агитаторсем хирте

СУРИНСК, ЕЛЧĔК РАЙОНĔ, августăн 7-мĕш. (Телефонпа). «Марс» колхоз тăваттăмĕш кун тырă вырать. Уйра 8 жнейкă, 200 çын ытла ĕçлеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăртса ĕçлеççĕ, нумайăшĕ нормăсене ирттерсе тултараççĕ. Ăмăртура иккĕмĕш бригада (бригадирĕ Ситтула Хасьянова) малта пырать. Ку бригада паян кĕр тыррисене вырса пĕтерчĕ. Колхозăн кĕр тыррисем тепĕр кун вырнмалăх юлаççĕ.

Çурлапа выракансем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Эмирова, Фахутдинова тата ыттисем стахановкăсем 450—500 кĕлте тăваççĕ. Машиновед-комсомолец Димухамедов кунне 5 гектар вырать. Вĕсем пурте ĕçе пысăк пахалăхпа туса пыраççĕ.

Колхозри агитаторсем аван ĕçлеççĕ. Уйра колхозниксемпе пĕрле 12 агитатор тырă вырать. Вĕсем кашни кунах колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăлла калаçусем ирттереççĕ. Ахметова, Сулейманова, Крылова, Табакова агитаторсем кашни кунах уйхирте нормăсене ирттерсе тултараççĕ. Колхоз председателĕ Газизов юлташ кашни кунах ĕç пĕтнĕ хыççăн бригадирсемпе агитаторсене пухса, çав кун мĕнле ĕçлени çинчен пĕлтерет, тепĕр кунне мĕнле ĕçлемеллине калаçса татать.

Кун хыççăн, тепĕр кунне, колхозниксем хушшинче агитаторсем хăйсен бригади малта пыни, кам лайăх ĕçлени çинчен калаçса параççĕ, çав ĕçлени çинчен пĕлтереççĕ. Колхозниксем хушшинче агитаторсем хăйсен ĕçне малта пыракан колхозниксене пример кăтартаççĕ.

Колхоза социализмлă ăмăрту мĕнле пынине кашни бригадăра тата колхозри стена хаçачĕсенче çутатса пыраççĕ. Кашни кунах икĕ кунта пĕр бригадăсенче вĕçĕмсĕр номер хаçат кăларнă. Уборка мĕнле пыни çинчен показательсен хăмине çине кашни кунах колхозниксем ĕç ирттерсе пыраççĕ. Çак ĕçсене туса пыни колхозниксене производствăра тата тимлĕрех ĕçлеме хавхалантарать.

И. ВАСИЛЬЕВ.

Коммунистсемпе комсомолецсем—уйхир ĕçĕнчи стахановецсем

КАНАШ, августăн 7-мĕш. (Телефонпа). Тырпулсене пухса кĕртме тытăннăранпа районри коммунистсемпе комсомолецсем колхозсен уйхирĕсенче тăрăшса ĕçлеççĕ.

Партин «Мотор» колхозри кандидатсен группин парторгĕ (вăлах ялсовет исполкомĕн председателĕ) Савельев юлташ жнейкăпа кунне 8—8,5 гектар вырать. Унти ытти коммунистсем те производствăра тăрăшса ĕçлеççĕ.

Комсомолăн Юнтапари пуçламăш организацинчи (секретарĕ Якимова юлташ) комсомолецсем пурте çурлапа вырнă çĕрте нормăна 150 процент таран тултарса ĕçлеççĕ. Уйрăмах комсомолецсем Николай Никифорова Таисия Никифорова аван ĕçлесе пыраççĕ.

Комсомолăн Юнтапари пуçламăш организацин секретарĕ Филиппов, комсомолец Сергей Гаврилов çурлапа норма тăрăх кунне 0,10 гектар вырас çĕре 0,15 гектар выраççĕ.

«Красное знамя» колхозăн машиновечĕ комсомолец Никитин кашни кунах вунă гектар ытла вырать, нормăна 150 процентран кая мар тултарса ĕçлет.

А. ДОБРОДУШЕВ.
ВКП(б) Канаш райкомĕн секретарĕ.

Çамрăксем хушшинче ĕçлессине маннă

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Комсомолăн «Труженик» заводри пуçламăш организацийĕ юлашки 7 уйăх хушшинче комсомол ретне пĕр çамрăка та илмен. Çавна пула организаци ўсме мар, чакса пынă. Вăл мĕнрен килнĕ-ха? Ку ыйтăва хирĕç комсомол организацин секретарĕ Сулев юлташ çапла ответлеме пăхать:

— Ман шутпа, заводра çамрăксем çахал, пурте комсомолецсем пулса ĕçлеççĕ. Пирĕн комсомола кĕме пример кăтартакансене илмелле-çке,—тет.

Производствăра пример кăтартакансене илмелле тени тĕрĕс. Ун пек çамрăксем заводра пур. Акă фактсем: заводра çамрăксен хисепĕ 50 çынран та иртет. Вĕсенчен чылайăшĕсем производствăна 3—4 уйăх каярах килсе кĕнĕ. Уйрăм рабочисем вĕсене вăхăт хушшинчех техникăна вĕренсе çитрĕç. Машинно-заготовительнăй цехри станочницăсем Ольга Зубрилина, Клавдия Иванова, Мария Семенова хĕрачасем кулленхи ĕç нормисене 130—200 процент тултараççĕ. Вĕсем çинчен пĕтĕм завод коллективĕ пĕлет. Анчах комсомол организацийĕн секретарĕ Сулев юлташ вĕсене ленинла—сталинла комсомол ретне явăçтарасси çинчен аса та илмест.

Столярнăй цехра ĕçлекенсенчен пурте тенĕ пекех çамрăксем. Паллах, вĕсем хушшинче пример кăтартса ĕçлекенсем пĕрре мар. Мĕн тунă-ха комсомол организацийĕ вĕсем хушшинче?

— Пирĕнпе пухусем тума ирттермерĕ, калаçмарĕç, — терĕç цехри çамрăк рабочисем.

Çаксенчен ĕнтĕ комсомолăн заводри организацийĕ çамрăксем хушшинче ĕçлессине пачах манăçа хăварни уççăнах курăнать. Тĕрĕс калаççĕ: комсомол организацийĕ çулталăк хушшинче те çамрăксене пухса уйрăм ыйту тăрăх пуху ирттермен. Ку çеç те мар, хăй ирттерекен пухусене те вăл çамрăксене чĕнмест. Производствăра пĕтĕмпе 3 комсомолец ĕçлет. Анчах вĕсем те ытти рабочисенчен нихăш енчен те уйăрăлса тăмаççĕ, механически цехри слесарь Князев юлташ кăна хăйне панă нормăна тултарса ĕçлет. Заводри сакăр комсомолецран нихăшĕ те цехсенче агитаци ĕçне уса пымаççĕ.

«Труженик» заводри организаци япăх ĕçленĕшĕн ВЛКСМ райкомĕ те айăплă.

Х. ЛИСИН.

РАЙОНРИ ХАÇАТСЕНЧЕН

Пĕтĕм бригада нормăна тултарса ĕçлет

Кĕçĕн Таябари «Коммунист» колхозăн (Елчĕк р.) 3-мĕш бригадинче алăпа тырă выракансем пурте нормăна ирттерсе тултараççĕ. 60 çулти Анастасия Панкратьева 0,10 га вырăнне 0,14 гектар вырать. («Колхоз ялавĕ»).

Государствăна 18 центнер купăста пачĕ

ШАХАСАН, августăн 7-мĕш. (Хамăр корр.). Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз ĕнер районри колхозсенчен чи малтан государствăна çĕнĕ пахча-çимĕç пама тытăнчĕ. Августăн 6-мĕшĕнче колхоз государствăна 18 центнер купăста, пĕр центнер хăяр леçсе пачĕ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пыратпăр

ВĂРМАР, августăн 6-мĕш. (Телефонпа). Спорт инвентарĕсем тăвакан фабрика коллективĕ, вăрман промышленноçĕнчи малта пыракан предприятисен чĕнĕвне сўтсе-явса, социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ, хăйĕн çине çакăн пек обязательствăсем илчĕ:

производство программине уйăхран уйăха ирттерсе тултармалла;

иккĕмĕш квартал планне августăн 20-мĕш тĕлне тултармалла;

ĕç тухăçлăхне иккĕмĕш кварталта 9 процент чухлĕ ўстермелле.

Унтанпа икĕ уйăх иртрĕ. Çак икĕ уйăх хушшинче пирĕн коллектив ĕçри хăвăртлăхсене ўстерсех пычĕ. Ĕçсен итогĕсене пĕтĕçтерсе тухнă чух хамăр обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пынине çирĕппĕн калатпăр. Коллектив производство программине май уйăхĕнче 172 процент, июньре 143 процент, июльре 181 процент тултарчĕ. Иккĕмĕш квартал планне 149 процент тултартăмăр. Çав вăхăтрах рабочисен ĕç тухăçлăхĕ 23 процент чухлĕ ўсрĕ. Кутĕлĕшпе стахановецсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Г. Гаврилов, А. Кузьмина, Е. Васильева, Г. Васильев, И. Смирнов, С. Селиванова, М. Волков юлташсем нормăна 2—3 хут ирттерсе тултараççĕ, лайăх пахалăхлă продукци параççĕ.

Ĕç вăйĕпе туллин усă курма тăрăшнă май, пулăшакан рабочисен хисепне чакарма пултартăмăр. Пулăшакан рабочисене ĕçре вĕрентсе пырса, квалификациллĕ рабочисен ретне кўçартăмăр, çапла вĕсен хисепне 22 процент чухлĕ чакартăмăр.

Пирĕн коллектив кăçал подсобнăй хуçалăха вăйлатас тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлет. Эпир пахча-çимĕçсене планпа пăхнинчен чылай ытларах лартса хăвартăмăр. Халĕ икĕ уйăх хушшинче ...тĕмĕр, купăста, кишĕр тата ытти çимĕçсем те хăвăрт ўсеççĕ.

Фабрикăри рабочисемпе служащисем, иртнĕ уйăхсенчи çитĕнўсене çирĕплетсе, çĕнĕ çитĕнўсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

И. ГОРБУНОВ.
Фабрика директорĕ.

Малта пыракан артельпе профшкул

Швейпромсоюз системине кĕрекен артельсенчен июль уйăхĕнче Караньялĕнчи «Труд» артель (правлени председателĕ Мокеев юлташ) тата Çĕрпўри профшкул (директорĕ Степанов юлташ) лайăх ĕçленĕ.

Караньялĕнчи «Труд» артельре (Октябрьски район) ĕçе тĕрĕс организациленĕ, социализмлă ăмăртăва лайăх ертсе пыраççĕ. Кашни кĕçкунĕ пĕтмессеренех рабочисем нормăна мĕн чухлĕ тултарнине шута илеççĕ, ăмăрту итогĕсене пĕтĕçтерсе тухаççĕ. Çапла туни рабочисен ĕçлес кăмăлне çĕклет, юлса пыракансене малта пыракансемпе танлашма пулăшать. Н. Семенова, В. Чубакова, М. Андреев, И. Сазонов юлташсем нормăна икшер хут ирттерсе тултараççĕ, А. Журикова юлташ 250 процент таран тултарать.

Коллектив тăрăшса ĕçленинчен артель плана ăнăçлăн тултарасси килет. Артель иккĕмĕш кварталти плана 153 процент, июль уйăхĕнчи плана 200 процент тултарнă, швейпромсоюз системинчи артельсен ăмăртăвĕнче мала тухнă.

Çĕрпўри профшкул та начар мар ĕçлет. Вăл промкоопераци системинчи артельсен июньри ăмăртăвĕнче виççĕмĕш вырăн йышăннă. Шкул коллективĕ иртнĕ уйăхри плана та ăнăçлăн тултарнă, планран ирттерсе чылай продукци панă.

Шкулра Кузнецова инструктор группи уйрăмах лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Кулленхи заданисене вăл 200 процент тултарать. Григорьева, Овчинникова тата Артюкова мастерсем нормăна виçĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Шкул коллективĕ август уйăхĕнче Канашри «Авангард» артельпе ăмăртать.

Инвалидсен артелĕ ăнăçлă ĕçлет

КАНАШ, августăн 6-мĕш. (Телефонпа). Инвалидсен «Красный воин» артелĕ (правлени председателĕ Корчагин юлташ) чылайранпа ĕнтĕ ăнăçлăн ĕçлет. Артель июль уйăхĕнчи ĕç планне 111 процент тултарчĕ, планран ирттерсе продукци пачĕ. Цехсем хушшинчи ăмăртура çĕвĕ çĕлекен тата тумтирсем сăрлакан цехсем малта пыраççĕ.

Артель коллективĕ ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсене туса кăларнипе пĕрлех, васкавлă заказсене те пурнăçлать. Хĕрлĕ Çар воинĕсем валли ăшă тумтирсем çĕлесе парас тĕлĕшпе коллектив пысăк ĕçсем тунă.

ИЮЛЬРИ РЕЗУЛЬТАТСЕМ

Шупашкарти макарон фабрики июль уйăхĕнче лайăх ĕçлерĕ: ĕç планне чылай ирттерсе тултарчĕ, чĕртавар тăккаланассине нормăран 2 хут чакарчĕ, топливăпа электроэнергине перекетлерĕ. Социализмлă ăмăртура рабочисем ĕç тухăçлăхне ўстерчĕç. Иртнĕ уйăхра кашни рабочи нормăна вăтамран 129 процент тултарчĕ. Тарасова, Кожанова, Черепанова, Плешанова, Архипова, Данилова, Яковлева стахановкăсем нормăна икĕ хута яхăн ирттерсе тултарчĕç.

Производство заведующийĕ Нацвалова, смена мастерĕ Денисова юлташсем ĕçе тĕрĕс йĕркелесе ертсе пычĕç.

Г. ВОЛКОВ.
Фабрикăн главнăй инженерĕ.

Комбинатри Хĕрлĕ ялава Павлов юлташăн цехне пачĕç

ÇĔМĔРЛЕ, августăн 7-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Комбинатри цехсенчен иртнĕ уйăхра Павлов юлташ ертсе пыракан цех уйрăмах лайăх ĕçлерĕ. Цех коллективĕ уйăхри плана чылай ирттерсе тултарчĕ. Цехра ĕç тухăçлăхĕ 34 процент, стахановецсен хисепĕ 36 процент ўснĕ. Рабочисем пурте нормăна тултараççĕ. Чылай стахановецсем 3—4 норма тăваççĕ. Васильев юлташ ертсе пыракан бригада уйрăм кунсенче 6 нормăна çитерет. Çак çитĕнўсене кура, комбинатри куçса çўрекен Хĕрлĕ ялава Павлов юлташăн цехне пачĕç. Хĕрлĕ ялав цех коллективне çĕнĕ çитĕнўсемшĕн кĕрешме хавхалантарать.

Х. ЛИСИН.

Ют çĕршывсенче

Румынире политикăллă шалти йывăрлăхсем çивĕчленни

СТАМБУЛ, августăн 6-мĕш. (ТАСС). Ют çĕршывсен Стамбулри лайăх пĕлсе тăракан çыннисен ушкăнĕ çапла калаçаççĕ: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче çăлтăр пысăк çухатусем тусна пула Румыни çарĕ 1942 çулти çĕнĕ кĕрĕ тĕле чылай арканнă тата унăн пысăк пайĕ стройран тухнă. Вăрçă пуçланнăранпа Румыни çарне икĕ хут çĕнĕрен уралатса йĕркеленĕ. Мирлĕ вăхăтра Румыни çарĕ 25 дивизирен тăнă. Вăрçăн малтанхи пилĕк уйăхĕ хушшинче 20 дивизи пĕтнĕ е аркала-аркана кайнă. Гитлер хĕстернипе кăçалхи çуркунне Антонеску темиçе хутчен çĕнĕрен мобилизаци туса ирттернĕ. Севастополь патĕнче тата фронтăн ытти участокĕсенче пулса иртнĕ çапăçусем хыççăн Германи командованийĕ Антонескупа татах та çĕнĕ мобилизацисем туса ирттерме хушнă.

Халĕ призыва илмелли закона улшăнусем кĕртнĕ, унта çар службине тăма юрăхсăррисен хисепне чылай чакарма палăртнă.

Питех те хаяр репрессисем йышăннине пăхмасăрах, халăхра тата çарта вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем ўссех пыраççĕ. Румыни хаçачĕсем хăйсемех пĕлтернĕ тăрăх, июнь уйăхĕнче трибуналсем темиçе çĕр румына, «хăйсен патриотизмĕ çуккине кăтартнăскерсене», суд тунă. Антонеску ушкăнĕн мероприятийĕсене хирĕç тăракан саботажсем промышленноç предприятийĕсенче те, çавăн пекех тата ялсенче те ўссе пыраççĕ.

Румыни правительстви ... пур предприятисене те ятарласа «военнăй надзирательсем» лартма лекет. Вĕсене чиксĕр пысăк полномочи пани, вĕсен рабочисене ĕçрен кăларма та, арестлеме, предприятин директорне çийĕнчех салатса ямалли те фабрикăсемпе заводсене вăхăтлăха хупма право пур.

Ялсенче кăçалхи июньрен вĕсĕнче уйсене пĕр-пĕрин пусне хыççăн пăхасси тăрас системăна кĕртнĕ. Ятарласа йышăннă закон тăрăх «ялти ĕçлев общинисем» текен общинăсене туни. Вĕсен задачинче хресченсем хăйсене мĕнле тыткаланине пăхса тăрас, вĕсем мĕнле ĕçленине «контрольлесе тăрасси» пулать. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Антонеску правительстви ялти жандармерин отрячĕсене вăйлатать. Общинăсем туса хуни тата жандармерие çирĕплетни уборка вăхăчĕпе килсе кĕраки вăхăтĕнче «ялхуçалăхне правительство енчен контрольлесе тăрассине çăмăллатать». Урăхла каласан, çакă вăл хресченсене, хăйсен ĕçĕн çимĕçĕсемсĕр тăратса хăварса, тĕппипех çаратни пулса тăрать.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, августăн 6-мĕш. (ТАСС). Югославин тĕрлĕ районĕсенче партизансен отрячĕсем Итали тата Германи оккупанчĕсене хирĕç вăйлăн çапăçаççĕ. Партизансен пĕрлешнĕ отрячĕсен группи Полхов Градец патĕнче нимĕçсен Люблянăран пынă колоннине çапса аркатнă. Гитлерла салтаксемпе офицерсене темиçе çĕр çынна пĕтерсе тăкнă тата çар грузĕсем тиенĕ темиçе автомашинăна тытса илнĕ.

Партизансен Словенире кĕрешекен отрячĕсем хăйсем ирĕке кăларнă Жужемберк хулине тата унăн таврашĕнчи территорие хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ. Горенски тата Штайерски облаçсенче чылай ялсене, çавăн пекех тата промышленнăçла Тржич хулине ирĕке кăларнă. Любель тăвĕ хушшинчи çул çинче нимĕçсен пысăк отрячĕ партизансен засади патне пырса тухнă, партизансем нимĕçсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

Партизансен Сава тата Поляна айлăмĕсенчи районсенче кĕрешекен темиçе отрячĕ нимĕçсен карательнăй колоннисене ăнăçлăн аркатса пыраççĕ.

Центрти Боснин, Босянская Краинăн тата Далмацин чылай районĕсенче çапăçусем малалла пулса пыраççĕ.

ÇЫВĂХРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, августăн 5-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: августăн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле мĕнпур секторсенче патрульсем активлăн кĕрешнине палăртнă. Англи авиацийĕ противникăн транспорчĕсем пухăнса тăнă вырăнсене атакăланă. Барди районĕнче противникăн моторолă суднисем çине пырса тапăннă. Вăтаçĕр тинĕсĕн тĕрлĕ пайĕсенче неприятелĕн виçĕ пысăк суднисем çине бомбăсем пăрахнă. Çав суднăсенчен пĕрин çине бомбăсем тĕл лекнине палăртнă.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, августăн 6-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: августăн 6-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Германи территорийĕ çине вĕçсе пырса тапăннă.

Августăн 4-мĕшпе 5-мĕшĕнче неприятелĕн самолечĕсем Англин кăнтăрти тата кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи çыранĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Хăшпĕр пунктсем çине бомбăсем пăрахнă.

Августăн 6-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противникăн самолечĕсем Англи çийĕнче пулнă. Хĕвелтухăç Англири чылай пунктсем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ РУР ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, августăн 5-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: августăн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Рур бассейнĕнчи чылай объектсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Англи истребителĕсем çав вăхăтрах противник оккупациленĕ территори çинчи чугунçул объекчĕсемпе ытти тĕрлĕ объектсене атакăланă.

ЛОНДОН, августăн 6-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерствин коммюникинче çапла каланă: августăн 6-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировка тăвакан самолечĕсем Рурăн чылай объекчĕсене атакăланă. 5 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман.

АКТАЙ ВИЛНИ

СТАМБУЛ, августăн 6-мĕш. (ТАСС). Стамбулри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Стамбулра Турцин ССР Союзĕнчи послĕ пулнă Али Айдар Актай вăхăтсăр вилсе кайнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Колхозсен арманĕсем çине ытларах çавăрăнса пăхмалла

Чăваш республикинче çил арманĕсем 1400 ытла, шыв арманĕсем 300 ытла шутланаççĕ. Армансен хисепĕ енĕпе пирĕн республика Совет Союзĕнче пĕррерĕмĕш вырăн йышăнать. Çапах та, армансем çителĕксĕр ĕçленине пула, вĕсене техника енĕпе начар пăхса тăнине пула, вĕсем кирлĕ чухлĕ тырă авăртса параймаççĕ. Хуласенчи рабочисемпе служащисем валли каякан çăнăха горючи вăйĕпе ĕçлекен механически армансенче авăртаççĕ. Анчах вăрçă йывăрлăхĕсем горючие питех те перекетлеме хушаççĕ. Çавăнпа та колхоз руководителĕсен задачи—çил тата шыв арманĕсене май пур таран туллин ĕçлеттересси, çапла майпа, механически армансен ĕçне çăмăллатасси, горючие перекетлеме пулăшасси пулать. Кашни колхозăн хăйĕн арманне юсавлă тытма, ăна пĕр чăрмавсăр ĕçлеттерме тăрăшмалла. Армансем туллин ĕçлени фронта çеç мар пулăшать, колхозниксене çителĕклĕ таран çăнăх авăртса парса, колхозра ытларах ĕçлеме май парать. Халĕ, уборка вăхăтĕнче, колхозниксем армансем тăрăх çўрессине пĕтермелле, вĕсене çăнăх вăхăтра тата кирлĕ чухлĕ авăртса памалла. Кирлĕ чухлĕ çăнăх авăртас тесен, пур пек армансене çеç мар ĕçлеттермелле, киввисене, çĕмрĕккисене юсаса ĕçе ямалла.

Çĕмрĕк армансене юсас тĕлĕшпе вара чылай районсенче ĕçсем начар пыраççĕ. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ армансене юсас тĕлĕшпе кăçал панă плана уйрăмах Пăрачкав, Улатăр районĕсем япăх пурнăçлаççĕ. Пăрачкав районĕнче çĕмрĕк армансем 17, Улатăр районĕнче—3, анчах юлашки вăхăтра пĕр арманне те юсаман. Советски районра та армансен хуçалăхне юсавсăр тытаççĕ, районри парти, совет организацийĕсем вĕсем çинчен манаççĕ.

Армансен хуçалăхĕ çине Октябрьски, Вăрмар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенче самаях тимлĕн пăхаççĕ теме пулать. Октябрьскипе Вăрмар районĕсенче 16-шар арман, Сĕнтĕрвăрри районĕнче 13 арман юсанă.

Райçĕрĕç пайĕсемпе райплансем колхозсен арманĕсене юсаттарас ĕçе çирĕпрехх ертсе пымалла. Армансен кăшкарĕнче, шăллă кустăрмисенче, сунаттисенче тата ытти механизмсенче пур çĕмрĕксене çийĕнчех юсаса тăмалла. Уйрăмах çунатсене юсавлă тытмалла, лайăх çунатсемлĕ арман çил вăйсăртарах пулсан та авăрма пултарать.

Пирĕн çил арманĕсем талăкра вăтамран 10—12 центнер тырă авăртаççĕ. Вĕсене юсаса тăрса лайăх ĕçлеттерсен, вĕсем çав нормăна 1,5 хут ўстерме пултараççĕ.

Çакăнпа пĕрлех колхоз арманĕсенче ĕçе организацилессине тата ĕçшĕн тўлессине тĕрĕс туса пымалла. Халиччен çакăн çине чылай çĕрте кирлĕ пек çавăрăнса пăхман-ха. Авăртма илсе тухнă тырра тĕрĕс шута илмеççĕ, мельник ĕçне тĕрĕслесе тăмаççĕ. Унтан та ытларах, шайкка укçи илнĕ çĕрте пăтраштараççĕ. Сăмахран, Красноармейски районри Именкасси колхозĕн арманĕнче кашни центнершăн 5 тенкĕ шайкка укçи илеççĕ. Çав вăхăтрах юнашар колхозсен арманĕсенче 10 тенке яхăн илеççĕ. Мельниксене ĕçкунĕ шутласа панă çĕрте те пăтраштарусем сахал мар. Колхоз правленийĕсен армансенче шайкка укçи илес, мельниксене ĕçкунĕ шутласа парас ĕçре РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн кăтартăвне пăсмалла мар, ăна тĕрĕс пурнăçласа пымалла.

Инженер И. БАЗИЛЕВ.

ФЗУ Чебоксарской хлопчато-бумажной фабрики об'являет набор подростков не моложе 16 лет с образованием не ниже 4-х классов

в группы: 1. ткачей,
2. с'емщиц на ватере.

Срок обучения 3½ месяца.

Учащиеся обеспечиваются общежитием, питанием и стипендией.

За справками обращаться в канцелярию школы по адресу: г. Чебоксары, ул. Володарского, дом № 5 (Дом печати) 2-й под'езд, 2-й этаж, ежедневно кроме общевыходных дней.

3—2.

Механическая мастерская Чувашстройтреста производит пересечку старых подпилков и слесарных пил. Качество продукции — хорошее.

Все организации, предприятия, колхозы и т. д. могут доставить старые подпилки, слесарные пилы на пересечку по адресу: Чебоксары, у. Луговая, № 12, телефон № 0-31.

3—2. Чувашстройтрест.

Утерянную печать участка № 4 «Сантехмонтаж» считать недействительной.

Администрация.

Чебоксарская контора Наркомсвязи производит прием учеников на телеграф и радиоузел.

Обращаться по адресу: Дом связи, 2 этаж, отдел кадров.

Администрация.

Чебоксарская контора НКсвязи доводит до сведения всех граждан г. Чебоксары и прилежащих селений о том, что установка новых и переноска существующих радиоточек на основании постановления СНК СССР от 29/IX 1939 г. производится исключительно силами радиоузла. Самовольная установка или переноска не допускаются.

За нарушение с виновных взимается штраф, а радиоточка выключается из радиосети.

Контора связи.

Артели «Кооператор» требуюся главный бухгалтер и бухгалтер расчетного стола. Оплата по госнормированию. Главный бухгалтер обеспечивается квартирой.

Чебоксары, ул. Ленина 6, телефон 6.27.

Чувашское отделение треста «Россбсбыт» в Чебоксарах и Канаше принимает в неограниченном количестве отходы кругов, сигментов и крошки черного и зеленого карборунда и электрокорунда. Просим организации сдать указанные отходы.

Мариинско-Посадский техникум землеустройства и мелиорации НКЗема РСФСР

объявляет прием студентов на первые курсы землеустроительного и гидротехнического отделений

Гидротехническое отделение готовит гидротехников со средним образованием, хорошо обладающих знанием производства работ по изысканиям, проектированию и строительству гидротехнических сооружений (плотины, водосливы, водоспуски, трубчатые и шахтные колодцы), осушению заболоченных земель, орошению земель, искусственному дождеванию, мелкому и глубокому бурению, а также по строительству водопроводов и гидроэлектростанций для колхозов, совхозов и МТС.

Землеустроительное отделение готовит техников-землеустроителей, хорошо знающих геодезическую технику по горизонтальной и вертикальной съемке (теодолитная, мензульная и производство невелировки) для составления сельскохозяйственной карты, проектирования дорожной трассы, для проектирования и строительства промышленных и жилых сооружений, отвод, планировку хозяйственных центров МТС, совхозов и колхозов.

Срок обучения 3 года.

Лица в возрасте от 15 до 35 лет, желающие поступить в техникум, имеющие образование не ниже неполной средней школы, должны подавать заявления по адресу: Мар.-Посад Чувашской АССР, ул. Ленина, 3, техникум землеустройства и мелиорации, в приемную комиссию, не позднее 25 августа сего года с документами: 1) об образовании, 2) о рождении, 3) о здоровье, 4) автобиографии, 5) 2 фотографические карточки.

Окончившие в 1941 и 1942 г. г. неполную среднюю школу, 8-й, 9-й и 10-й классы средней школы принимаются на 1-й курс техникума без испытаний. Без испытаний принимаются также лица, демобилизованные из рядов РККА, имеющие подготовку не ниже семи классов неполной средней школы, независимо от времени ее окончания, а все остальные поступающие подвергаются приемным испытаниям с 25 по 30 августа по предметам: 1) математика, 2) русский язык и литература, 3) физика, 4) Конституция СССР — в объеме программы неполной средней школы.

Все принятые будут обеспечены общежитием и постельными принадлежностями.

Принятые как отличники учебы, а также выдержавшие приемные испытания по всем четырем предметам с отметками «отлично», будут обеспечены государственной стипендией.

Начало учебных занятий с 1 сентября 1942 года.

4—4. ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

1340 Типография №1 Управления полиграфической промышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Р 6 58 84